**Ватта сума сăвакан- хăй те ырă куракан.**

**Пĕлӳ тĕллевĕ:** Ватăсене халалласа çырнă сăвă-юрăсемпе, ваттисен сăмахĕсемпе тата каларăшĕсемпе паллаштарасси.

**Сапăрлăх тĕллевĕ**: Ваттисене хисеплес туйăма аталантарасси, ырă сăмахпа чунĕсене ăшăтма, ырă ĕçсемпе пулăшма хавхалантарасси,.

Сценăна ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, сăвăсем çырнă плакатсемпе илемлетнĕ, «Пулăшма ялан хатĕр» ачасем ваттисене пулăшнине кăтартакан сăн ӳкерчĕксен хаçатне, ачасен укерчекесене çакнă. Плакатсем çинчи тĕслĕхсем:

1. Ваттисен сăмахĕсем –

Ăслă, тарăн шухăшсем.

Вĕрентеççĕ пурăнма,

Ырă ĕçшĕн кар тăма.

Н. Кушманов

2. Ваттисен каланине

Ачаран хывсан ăша,

Тăнласан вĕсен пилне

Пăрăнать санран нуша.

Н.Кушманов

3. Ват çын – тăват çын.(Ват.сăм.)

4. Ватти пур та, латти пур.(Ват.сăм.)

5. Ватта ырă ту.(Ват.сăм.)

6. Ватти калани вырăнлă.(Ват.сăм.)

7. Ваттисем калани вырăна килет.(Ват.сăм.)

**Ертсе пыракан:** - Ырă кун пултăр, кукамайсемпе кукаçисем, асаннесемпе асаттесем, кинемейсемпе мучисем! Сире паянхи уяв ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр, ырлăх-çитлĕх, ватлăх кунĕсенче канлĕх, çамрăксенчен пысăк тимлĕх сунатпăр. «Ĕмĕр ĕмĕрлесси – уй

урлӑ каҫасси мар»,- тенӗ ваттисем. Ҫапла, пурнӑҫра темӗн те пулать, унӑн хӑйӗн йӗрки, шӑпа пӳрни те тӗрлӗрен.

Ачасем тухаҫҫӗ.

1 ача: - Кукамайсем, асаннесем, эсир пурри – аван.
Ӳсеҫҫӗ вӗтӗр-шакӑрсем эсир савса пӑхсан.

2 ача: - Ман асанне ир тӑрать,
Пирӗншӗн вӑл тӑрӑшать.
Тутлӑ апат пӗҫерет,
Ӑшӑ сӗт суса кӗрет
3ача: - Асаннене юратса
Эпир пӗрле ӗҫлетпӗр,
Кайран пӗрле савӑнса
Тӗрлӗ ҫимӗҫ ҫиетпӗр.
4 ача: - Кукамайсем, асаннесем –
Йӑх-тӗп тыткӑчисем.
Пурӑнӑҫа кӗртсе илем
Ӳсеҫҫӗ мӑнуксем.

5 ача: Асаннемӗр пирӗн пултӑр яланах,
Асаннемӗр пирӗн култӑр яланах,
Асаннемӗр пире савтӑр яланах.
Асаннене юратар-и яланах

6 ача: Асаннемӗр пирӗн пултӑр яланах,
Асаннемӗр пирӗн култӑр яланах,
Асаннемӗр пире савтӑр яланах.
Асаннене юратар-и яланах

7 ача: - Ҫапла, ватта сума сунни,
Кахалланмасӑр пулӑшни,
Сӗнӳ-канаш унран ыйтни –
Ак ҫакӑ пулӗ чӑн пахи.

Пурте : Тавтапуҫ эсир пурришӗн,

Ăс, канаш ялан панишĕн!

( Ачасем «Асанне» юрă шăрантараççĕ те кĕрсе каяççĕ.)

**Ертсе пыракан:** Хисеплĕ кукамайсемпе кукаçисем, асаннесемпе асаттесем, сире сума суса нумай сăвă-юрă хывнă. Пирĕн çамрăк хунав, савăнăçлă саманара çитĕнекен ачасем, сире ĕçре пулăшса пыччăр, ăшă сăмахпа йăпатма пĕлччĕр тесе сунас килет..

1 ача. Ватăсене пулăшма,

Тухар,тухар, ачасем!

2 ача. Урай çума, шыв йăтма,

Тума тĕрлĕрен ĕçсем.

3 ача. Кайăк сасси итлеме

Сад пахчине тухмалла.

4 ача. Ырă ĕçе кӳленме

Ватă патне каймалла.

**Ертсе пыракан:** Халĕ сире ачасен ушкăнĕ хăйĕн ташшипе саламлĕ.

( Ачасем чăваш ташши ташлаççе)

**Ертсе пыракан:** Йывăç лартсан сад çитĕнет.

Уй-хир пулсан тырпул ӳсет.

Ватти пулсан йĕрке пулать,

Ваттипеле пурнăç пулать.

( хĕрачасем «Асанне» юрă юрлаççĕ.)

**Ертсе пыракан:** Шел пулин те мăнуксем те тĕрлĕрен пулаççĕ çав, хăш-пĕр чух сире вăхăтра тивĕçлипе хаклайманни те пулать. Акă çакăн пек мăнук çинчен сире ачасем «Юратнă асанне» сценка кăтартĕç.

**Ертсе пыракан:**

Халĕ эпир асаннесен пултарулăхне лайăхрах палăртма вăйăсем выльăпăр.

**Тупсăмне туп.**

Асаннесен тупмалли юмахсен тупсăмсене тупмалла.

1. Хĕлĕн-çăвĕн кĕрĕкпе. (Сурăх)
2. Ай! Тет, вăй! Тет, чунĕ пур та, юнĕ çук. (Купăс)
3. Пĕр тухса кайсан нихăçан та хуса кĕртейместĕн.(Сăмах)

4. Яшт! Выртать, карăнать,
Çын выртсан лапчăнать,
Çынни тăрсан хăпарать. (Тӳшек)

5. Тĕнчере мĕн питĕ хытă чупать? (Шухăш)
6. Юнĕ пур, чунĕ çук. Çиекеншĕн сахăрĕ çук.(Палан)
7. Хир варринче шур кĕтӳ çӳрет. (Тĕтрĕ)
8. Шывра путмасть, çĕрте çĕрмест. (Кăмрăк)
9. Карта çумĕнче шур ĕне выртать. (Кĕрт)
10. Кĕрхи шывра çуралать, çурхи шывра çухалать. (Пăр)
11. Мăн асаттен миххинчен шурă шăрçа тăкăнать. ( Çумăр)
12. Асатте çурли çап-çутă, алла тăсса илме çук. (Уйăх)
13. Асанне шупăрĕ пĕтĕм çĕре хупларĕ. (Юр)
14. Пĕр майра пин хут пăхса макăрать. (Сухан)

**Сăпка юрри.** Асаннесен сăпка юрри юрласа мăнукĕсене çывăрттармалла.

Чăваш ташши. Асаннесен мăнукĕсемпе такмаксем юрласа ташламалла.

**Ваттисен сăмахĕсене каласа пĕтермĕлле**.

1)Атте- аннерен хакли никам та…(çук тĕнчере).
2)Аçупа аннӳне хисепле, хăвнах…(ырă пулĕ).
3)Ывăл ача ашшĕ йĕрнех…(пусать).
4)Амăшĕ епле,…(хĕрĕ çапла).
5)Çăкăртан аслă…(пулаймăн).
6) Çăкăр-тăвар…(хире-хирĕç).
7)Кĕнеке-пĕлӳ…(çăл куçĕ).
8)Асатте кил хушши тытать,…(асанне-пӳрт ăшши).
9)Ватăпа ватă пул,…(çамрăкпа çамрăк пул).
10)Йышпа ĕç тума аван, пĕччен…(пыл çиме аван).
11)Ĕç вăл- …(пурнăç илемĕ).
12)Кахал çын çине çумăр…(виçĕ кун малтан çăвать).
13)Çынна ырă тăвакан хăй те…(сăвап курать).
14)Çыннăн ĕçĕ те, чунĕ те …(ырă пултăр)

**«Ах, асатте»юрă** (сăвви Н.Васильевăн) юрлаççĕ.

**Ертсе пыракан:** Тавтапуçах сире чăтăмлăхшăн, ăста алăллă пулнăшăн, пире ăс панăшăн, пирĕншĕн тĕслĕх пулнăшăн. Сывлăхăра упрăр, ватлăх кунĕсем лăпкă пулччăр! Тавтапуç!

( Ачасем ваттисене хайсен аллипе тунă парнесем параççе, пурте перле çавра сетел хушшине лараççе.)

## Усă курнă литература.

1. «Традиции Чувашского Края» Л.Б.Соловей. Чебоксары, Чувашское книжное издательство,2015г.

2. «Родники здоровья» И.В.Махалова, Чебоксары, Чувашское книжное издательство,2015г.

3. «Чувашские пословицы, поговорки и загадки» Игнатьева Р. К., Чувашское книжное издательство, 2012 г.

4. «Пирен увсем:чăваш халăх йăли- йеркипе çыхăннă уяв сценариĕсем» Н.Н.Чернова-Шупашкар,2006.

5. «Юрă пултăр парне» Н.Н.Маслова пухса хатĕрленĕ Шупашкар, 2007.